Çур акири ĕçе çумпа чир-чĕре парар мар

# «Тухăç никĕсĕшĕн кĕрешесси – паянхи ответлă ĕç»

Çапла пуçларĕ хамăрăн калаçăва «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ Алексей Семенович СЕМЕНОВ. Çĕр ĕçĕнче пуян опыт пухнăскер, çулсенчи агроном ял хуçалăхĕнчи паянхи йывăрлăхсен ытларах пайĕ çĕр ĕç технологине пăхăнманнинчен тухса тăнине те яр уççăнах курать. Технологие пăхăнманранах иртнĕ çул чылай хуçалăхсем планпа пăхнă чухлĕ тыр-пул туса илеймерĕç. Пулнă пысăк çитменлĕхсенчен çаксене палăртмалла: ĕçре малтанхи çул мĕнле культура акнине шута илменни, çĕре кирлĕ пек хатĕрлеменни, çум курăкпе кĕрешменни, çĕнĕ технологисене çул паманни, вăрлăх пахалăхĕ çине тимлĕх уйăрманни, удобренисемпе кирлĕ чухлĕ ĕçлеменни, акнă-лартнă культурăсене çум курăкĕнчен тата чирчĕрпе тĕрлĕ сăтăрçăсенчен хӳтĕлеменни.

Уйрăммăн вăрлăх тата шăтса тухнă калча сывлăхĕ çинче чарăнса тăрас килет. Тĕрлĕ чир-чĕр ытларах вăрлăх урлă усен-тăрана куçать. Çапла вара чирлĕ вăрлăх акнипе тата калча çинче чирчĕрпе сăтăрçăсене аталанма çул уçса панипе кĕр çитсен тухăç кĕтнĕ пек пулмасть, чир-чĕр çеç ытларах сарăлать. Апла пулсан çĕр ĕçченĕн ӳсен-тăранăн пур чир-чĕрĕсемпе кĕрешме те хатĕр пулмалла. Ахальлĕн кая юлсан каю шăтать.

Паянхи çанталăк ӳсен-тăран çинче чир-чĕр, хурт-кăпшанкă аталанма, анасем çинче çум курăкне вăй илме пулăшать. Кунта çакна каласа хăвармалла, юлашки çулсенче çĕр ĕçĕнче çĕре сухаламасăр çиелтен хатĕрлессипе ĕçлесси вăй илме пуçланăран чылай сăтăрçăсем çĕр çинчех юлаççĕ. Вĕсене аталанма çул ансатланать. Кĕрхи çĕртме туман хирсенче вара сăтăрçăсем малараххах «ĕçе» тытăнчĕç ĕнтĕ. Вĕсемпе кĕрешме чи малтанах агротехникăлла майсемпе усă курмалла: пусăсене сӳрелемелле, çĕр улми речĕсене кăпкалатмалла, выльăх кăшманĕн речĕсене чĕрмелле. Çак ĕçсем çĕр структурине лайăхлатаççĕ, тăпрара нӳрĕк сыхласа хăвараççĕ, халь тухакан çумсене аталанма ура хураççĕ. Агротехникăлла мелпе çумсене шур çип тымар янă чухне пĕтерме меллĕ. Ку ĕçе кая хăварсан хирсем çум айне пулаççĕ. Анасене сӳреленĕ чух минераллă удобрени пуррисен калчасене апатлантарасси пирки те шутламалла.

Агротехникăлла мелпе ĕçлесе çумран хăтăлма ĕлкĕреймесен, çĕр ĕçченĕн химилле препаратсемпе ĕçлесси çине куçмалла пулать. Тыр-пул пуссисенчи химилле ĕç вăл – «симĕс пушара» васкаварлă сӳнтерни. Çак ĕçĕн пуçламăшĕ тыр-пул пуссисенче палăрчĕ те ĕнтĕ.

Урпа анисене тапăннă пăрçапа кĕрешессине кăçал Ильич яч. хис., «Герой» хуçалăхсенче «Террадим КЭ» препаратпа пуринчен малтан туса ирттерчĕç. Кунта çакна та каласа хăварас килет. Пăрçасем ытларах тапăнсан, анасене хĕррипе пĕтĕм тавра е пĕтĕмпех «БИ-58 КЭ», «Фастак КЭ» препаратсемпе пĕрĕхсе тухмалла.

Иртнĕ çул пире тырă пыйти (злаковые тли) питĕ нумай сиен кӳчĕ. Вĕсем тырăри клейковинăна пĕтернине е сахаллатнине пула тулă тухăçĕ самай чакрĕ. Çакна асра тытса тата кун пек çухату кăçал ан пултăр тесе пусăсене «Кинмикс», «БИ-58», «Фастак» препаратсемпе «апатлантарса» тухмалла.

Тыр-пул калчисем çинче сăтăрçăсемпе кĕрешнĕ хушăрах «симĕс пушара» сӳнтерессипе ĕçлемелли пирки те манса каяс марччĕ. Ку ĕççене пĕр ĕç вăхăтĕнчех пурнăçлама пулнăран ытлашши тăкаксăрах тыр-пул пуссисене çумран хӳтĕлеме «Логран», «Гренч», «Ковбой-Супер», «Магнум» препаратсемпе пĕрĕхсен аван пулмалла.

Районта пăрçа пуссисем сахалланчĕç пулсан та, вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстересси, çителĕклĕ тухăç илесси кашнинех шухăшлаттармалла. Апла пулсан пăрçа уйĕсене малтанах сӳрелесси тата «Агритокс», «Фюзелд форте» гербицидсемпе пĕрĕхесси пирки самантлăха та манмалла мар.

Паянхи манăн сăмахăм çĕр улмин пулас тухăçĕ пирки те. Йăлтах тăватпăр-и-ха эпир вăл пысăк пултăр тесе? Ăна сыхласа хăварас технологие пăхăнатпăр-и? Ку ыйтусем çине хурав парассипе пирĕн паян ĕçлеме пуçламалла.

Малтанах ретсене кăпкаласси. Çĕр улми пуссисенче çак ĕçе çу каçа 2-3 хутчен пурнăçласан «иккĕмĕш çăкăр» çум айне пулас хăрушлăх иккĕмĕш вырăна юлать. Анчах кунта та химилле препаратсемпе ĕçлемесĕр майĕ çук. Çĕр улми шăтиччен пусăсене «Зенкор», «Агритокс», «Титус», «Раундап» препаратсемпе пĕрĕхсе-шăварса тухни тата çĕр улми çеçки 10 см ӳссен, ăна «Лазурит» препаратпа пĕрĕхни тухăç çине пысăк витĕм кӳрет.

Колорадо нăррипе пĕрлех фитофтороз чирĕ те «иккĕмĕш çăкăра» пысăк сиен кӳрет. Çак чир çинчен тата çĕр улмие унран сыхласа хăварасси пирки эпир йăлтах пĕлетпĕр-и-ха? Пĕр майлă хурав иккĕлентерет.

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи пин гектар ытла çĕр улмипе çынсен килти хушма хуçалăхĕсенчи «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕсене пĕрле илсен, çак культура Муркашсен çĕр ĕçĕнче тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнать теессĕм килет. Анчах çут çанталăк паракан тупăша пĕтĕмпех кĕлете кĕртетпĕр-и-ха? Çакăн çине хирĕçле хурав парас мар тесен çĕр улми сăтăрçисемпе тата ӳсен-тăранăн чирчĕрĕсемпе вăхăтра кĕрешес пулать. Ахальлĕн кĕркунне çур акире лартнă чухлĕ тухăç илнипе кăна эпир инçете каяймăпăр, наци проектне пурнăçлассине те пысăк тӳпе хываймăпăр.

Иртнĕ çул çĕр улми сăтăрçисемпе тата «иккĕмĕш çăкăр» чирĕсемпе «Герой», Ильич яч. хис., «Свобода», «Ударник» хуçалăхсем ыттисенчен тăрăшуллăрах ĕçлерĕç, чылай чухне тĕслĕх вырăнне те пулса тăчĕç. Колорадо нăрринчен «Конфидор», «Актара», «Моспилан», «Танрек» препарат сапса хӳтĕленнипе пĕрлех фитофторозпа альтернариозран тата мароспориозран «Танос», «Ридомил Голд», «Цинеп» фунгицидсемпе ăнăçлă усă курмалла.

Фитофторозран хӳтĕленме хатĕрленĕ программăпа тĕрĕс те тĕллевлĕ усă курни пысăк пахалăхлă та тухăçлă çĕр улми илме май парать. Ку вара – хуçалăх экономикин тĕрекĕ.

Фитофторозран хӳтĕленмелли фунгицидсемпе пĕрремĕш «апатлантарăва» çĕр улми çинче асăннă чирĕн пĕрремĕш паллисем пулсанах туса ирттермелле. Çакă вăл фитофтороз спорисем çĕр улми çулçисемпе тунисем çине лекесрен, чирĕн çеçкери шалти палăрăмсем вăй илесрен сыхлать, ана çинчи чир çăл куçĕсене пĕтерет.

Манмалла мар, фитофторозран хӳтĕленмелли препаратсен сывату вăйĕ ӳсен-тăранта чир шала кайсан хăватне çухатать. Чирĕн куçа курăнакан паллисем тухсан фунгицидсен паянхи ассортиментĕнчен нихăшĕ те ӳсентăрана чиртен çăлса хăвараймасть.

Çак чиртен хӳтĕленӳ ĕçĕсене тума специалистсем пĕрремĕш хутĕнче комплекслă фунгицидпа ĕçлеме сĕнеççĕ. Çакна валли «Танос» комплекслă фунгицид уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕлтĕр ку препаратпа «Герой» хуçалăх уйрăмах ăнăçлă усă курчĕ.

Фитофторозран хӳтĕленсе туса ирттерекен хыççăнхи ĕççене 8–10 кун иртсен пурнăçламалла. Çумăрлă условисенче ку вăхăта пĕчĕклетме те юрать. Ĕççене 2-3 хут пурнăçлани те ытлашши пулмасть.

Кĕскен купăста, сухан, кишĕр пăхса ӳстересси пирки. Купăста ӳстерекенĕн çак культурăн бактериоз чирĕнчен (купăста пуçĕ çĕрни), купăста çине тапăнакан пăрçаран сыхланмалла. Пирĕн патăмăрта вĕсенчен сыхланмалли пур препаратсем те пур.

Суханăн пероноспороз чирĕ (çулçăсем шурални) кашни кил хуçинех шухăшлаттарать. Унран «Ридомил Голд», «Бордоская смесь» препаратсем усăллă.

Кишĕр анисем çинче кишĕр шăнипе кĕрешме «Децис», «Актеллик», «Инта-Вир» препаратсем вырăнлă.

Юлашкинчен çакна каласа хăваратăп. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхрисемпе пĕрлех килти хушма хуçалăхсенче те акнă-лартнă культурăсенчен пысăк тухăç илес тесен вĕсене тĕрĕс пăхса ӳстермелле. Çак ĕçре ыйтусем пулсан эпир сире хамăр патăмăрта хапăл тусах йышăнатпăр. «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн специалисчĕсем сире канашпа та, ӳсен-тăрансене чир-чĕртен тата сăтăрçăсенчен сыхламалли препаратсемпе те вăхăтра пулăшĕç. Кирлĕ пулсан эпир хуçалăхсене те, ял çыннисем патне те вырăна тухса пăхассине те практикăлатпăр. Ăна кура панă пулăшу эффективлăрах та пуласси пирки иккĕленӳ çук.

Çавăн пекех препаратсене вĕсемпе сутă тума ятарлă ирĕк илнĕ операторсенчен илме тăрăшмалла. Вĕсен шутĕнче «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕ те. Вăл уйрăм районта пурăнакан кашни çынах пĕлекен вăрлăх инспекцийĕнче вырнаçнă.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен пĕлтерeççĕ

# Тимлĕх тени кашнин пулмалла



Пурнăç хăвăрт малалла аталанни, вăл çĕнĕлĕхсемпе тулсах пыни автомобиль çулĕсем çине тухсан яр уççăн курăнать. Кунта çĕршывăн çĕнĕ наци проекчĕсемпе тунă пĕрремĕш тата татăклă утăмĕсем, тĕнче аталанăвĕпе тан пыма тăрăшнисем, çынсен пурнăçĕ пĕр вырăнта тăманни тата ытти те алă тупанĕ çинчи пекех куç умне пулать. Çакă, паллах, лайăх. Пурнăçăн хăвăрт улшăнăвĕнче автомобиль çулĕсем çине тухакан техника хатĕрĕсен хуçисемпе çуран çул çӳрекенсем çул-йĕр правилисене пĕр çын пек пăхăнсан çĕнĕ малашлăх уçăлать. Ăна пурте пĕлетпĕр пулин те, йĕркене пăснă вуншар тĕслĕхре техника ванать, çунса кĕл пулать, çынсен пурнăçĕ татăлать. Çаксем нумай шухăшлаттараççĕ.

Календарь çинче çу уйăхĕ иртсе пырать. Кăçалхи 5 уйăха пĕтĕмлетме хальлĕхе иртерех пулсан та, январь – апрель уйăхĕсен кăтартăвĕсем паллă. Çак тапхăрта, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, çул-йĕр çинчи аварисен шучĕ те ӳсрĕ, инкек тӳсекенсен хисепĕ те нумайланчĕ. Кунпа пĕрлех патшалăх çулйĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторсен ĕçĕ те кăткăсланчĕ. Хăйсен пăйĕнчи ВАЗ маркăллă икĕ автомашинăпа вĕсен çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха тивĕçлĕ шайра тытассипе ĕçлесе ларса канма та вăхăт пулмарĕ.

Анализ çакна кăтартса парать: кăçалхи январь – апрель уйăхĕсенче район территорийĕнчи çул-йĕр çинче 15 автоавари пулчĕ. Вĕсенче 20 çын аманчĕ тата икĕ çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Курăнать ĕнтĕ, автоçулсем çинче анлă «вăрçă» пырать.

Çак тапхăрта Мускав – Хусан федераллă автотрасса çинче 5 автоавари (пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 11) пулчĕ. Вĕсенче 10 (17) çын аманчĕ, 1 (1) çын вилчĕ. Федераллă автоçулпа пĕрлех республика пĕлтерĕшлĕ тата вырăнти çулсем çинче те çул-йĕр правилисене пăсасси çӳллĕ шайра. Асăннă тапхăрта республика пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче кăçал 4 инкек пулчĕ (пĕлтĕр те 4), 4(7) çын аманчĕ. Федераллă тата республика пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче аварисен хисепĕ пĕчĕкленчĕ пулсан, вырăнти çулсем çинче вăл икĕ хута майлă ӳсрĕ: пĕлтĕрхи 3 тĕслĕхрен 5-е çитрĕ. Вĕсенче 5 (3) çын аманчĕ, 1(0) вилчĕ.

Асăннă ӳкерчĕк пирĕн инспекторсем ответлăха туйса ĕçлемен пулсан татах та хăрушăрах пулма пултаратчĕ. Çакна патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн административлă практика ĕçĕ те кăтартса парать. Çулталăкăн малтанхи 4 уйăхĕнче пирĕн инспекторсем 915 (иртнĕ çул 781 пулнăччĕ) административлă протокол çырчĕç, 12 (9) хутчен руль умĕнче ӳсĕр пуçпа ларакансене тытса чарчĕç, çулйĕр çинчи правилăсене пăсса хăвăртлăха ӳстернĕ 304 (270) тĕслĕхе тупса палăртрĕç, çуран çӳрекенсем çул-йĕр правилисене пăснă 90 (34) тĕслĕхе регистрацилерĕç. Куратăр ĕнтĕ, çул-йĕр правилисене пăсасси водительсемпе çуран çӳрекенсем хушшинче те пысăк. Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторсем вăтамран пĕр сменăра тупса палăртнă çул-йĕр çинчи йĕркене пăснă тĕслĕхсем кăçал 7,56-па танлашрĕç. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 1,05 пысăкрах.

Район территорийĕнче 76 автохуçалăх вырнаçнă. Кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 6996 техника единицине учета тăратнă. Вĕсенчен 1401 единици предприяти-организацисенче пулсан, 4465 автомашина – уйрăм çынсен харпăрлăхĕнче. Кунпа пĕрлех районта 1130 единица мототранспорт шутланать. Куратпăр, районăн техника хăвачĕ пысăк. Вĕсене пăхса тăрассипе кăçал планпа килĕшӳллĕн 12 тĕрĕслев ирттертĕмĕр, техника хуçисене 76 предписани патăмăр, 12 тĕслĕхĕнче административлă майпа айăпларăмăр.



**«Çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăхăнсан çакнашкал инкексем пирĕнтен пăрăнса иртĕç», – тет С. Иванов.**

Çулталăк пуçланнăранпа 4 уйăхра патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторсем хутшăннипе 6 преступление уçса пама май килчĕ.

Январь – апрель уйăхĕсенче автобус çӳрекен çулсене 32 хутчен тĕрĕслерĕмĕр, вĕсене пăхса тăракансем тĕлĕшпе 32 предписани патăмăр, должноçри 6 çынна административлă майпа айăпларăмăр.

Мĕн калам-ха сăмахăма вĕçленĕ май. Çулсем çинчи йĕркелĕх патшалăх çулйĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторĕсем тăрăшнипе çеç туллин пурнăçа кĕреймест. Ку ĕçре пур те тимлени кирлĕ.

**А. ЕРШОВ, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Килти хушма хуçалăх

# Груша мĕншĕн çĕр улми тутиллĕ пулать?

Çакăн вăрттăнлăхĕ опытлă пахчаçăсемшĕн паллă ĕнтĕ, анчах тинтерех пахча ĕçне кӳлĕнекенсемшĕн кунта вĕренмелли чылай.

Ыйту хуравĕ çакăнта: нумай пахчаçă груша çимĕçне йывăç çинчех пиçтерсе çитересшĕн. Çакна вара тума юрамасть. Грушăн лайăх тути ăна вăхăтра татсан – çурма пиçсе çитсен – кăна нормăна кĕрсе çитет.

Йывăç çинче пиçсе çитнĕ грушăсен тути крахмал майлă пулса каять. Пиçсе иртсе кайни çинчен грушăсем саралса кайни калать. Грушăсене хăçан татмалли пирки тĕп тĕрĕс калама çук. Вăл çут çанталăк условийĕсене пула улшăнать. Йывăçăн кăнтăр енче вырнаçнă çимĕçĕсен малтанхи партийĕ саралма пуçласанах пĕтĕм тухăça татса пуçтарса кĕртмелле. Çакăн пек тунă çимĕçсен малтанах темиçе кун сулхăн пӳлĕмре пиçсе çитмелле. Кун пек çимĕçсем вăхăт иртсен сĕткенлĕ пулса çитеççĕ.

**«Домашняя газета» хаçатран.**

Следстви комитетĕнчен

# *Тупма пулăшар*

Кăçалхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайне хамăр районти Çĕньял Хуракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан 28 çулхи Алина Геннадьевна Смирноваран 1976 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче Шупашкарта çуралнă тата унтах пурăннă, урăх ашшĕнчен тăван аппăшĕн Анна Евгеньевна Андрееван мăшăрĕ Виктор Александрович Андреев çухални çинчен пĕлтерни килчĕ. Тепĕр кунне çакăн пирки В. А. Андреевăн хуньамăшĕн – Людмила Георгиевна Смирнован – пĕлтерĕвĕ те çитрĕ. Кун çинчен пĕлекенсене районти шалти ĕçсен пайне е район прокуратурине пĕлтерме ыйтатпăр.

# *Çутă юпи çинчен ӳкнĕ*

Çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чаçне районти тĕп больницăн хирурги уйрăмĕн медсестри пĕлтерни çитнĕ. Унтан çакă палăрнă: «Чувашэнерго» уçă акционерлă обществăра оперативлă бригадăра электромонтерта ĕçлекен 47 çулхи Н. Кожевников çак кун 17 сехет тĕлĕнче Лантăш ялĕнче электропередача линине юсанă чух çутă юпин йывăç пайĕпе пĕрле çӳлтен ӳкнĕ. Çавна пула алăура хуçăлнă вырăнсем пур. Ку инкек тĕлĕшпе процессуаллă йышăну тума документсене Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайне ярса панă.

**С. КОШКИН, Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**